


## ВИÇĔ ХĔР—ТУС

Виçĕ хĕр-тус — Аня, Илемпи тата Элине — расна сĕт коктейлсем туяннă. Вĕсене шурă, кăвак тата симĕс стакансене тултарнă. Аньăна шурă мар стакан лекнĕ, Илемпие кăвак стакан мар. Шурă стаканра банан коктейлĕ пулман, кăвак стаканра вара ваниль коктейльне янă. Илемпи çĕр çырли коктейльне килĕштермест. Элине мĕн туяннă тата мĕн тĕслĕ стаканра?



**Мĕншĕн сĕт шурă тĕслĕ?**

**Наташа,**
**Шомик шкулĕ**

**КАЗЕИНПА ТАТА АЛЬБУМИНПА ТУЛНĂ СТАКАН**

Сĕт 80-90 процент шывран тăрать. Сĕте казеинпа альбумин тата минераллă тăварсем шуратаççĕ. Çу сĕтре ирĕлмест, эмульси тумламĕсем пулать. Вăл çутă пайăркине чалăштарать. Сĕт шурă тĕслĕ курăнать пулин те унти çу чăннипе витĕр курăнать, ӳсен тăран çăвĕ тĕслĕ сарă.

## ÇИТЕС НОМЕР 2007 ÇУЛХИ КĂРЛАЧĂН 18-МĔ ШĔНЧЕ ТУХАТЬ.

# ГОРОСКОП 2007

Ял хуçалăхĕнче тырă-пулă, улма-çырла ăнса пулать. Нӳхрепсем тата хранилищесем тĕрлĕ çимĕçпе тулли пулĕç. Ĕнесем сĕт вăйлă антарĕç, выльăх-чĕрлĕх те аван ӳт хушĕ. Пĕр сăмахпа каласан, ку çул укçа-тенкĕ ĕçлесе илес текенсем валли ăнăçлă пулĕ. Ахальтен мар ĕнте сысна кĕлеткиллĕ копилкăсем пурлăха тата ăнăçлăха сăнлаççĕ. Сыснан çурăсем нумай пулнăран Китайра ăна амалăх тата ăнăçлăх палли тесе хаклаççĕ. Туйра сысна пулсан çамрăк мăшăрсем ĕмĕрĕпех телейлĕ тата пуян пурăнĕç тесе ĕненеççĕ. Укçа-тенкĕ çителĕклĕ пулни çынсене пĕр-пĕринпе сăпайлăрах пулма хистет тата чухăнрах пурăнаканнисене пулăшма май парать.

**Сысна çулĕ — вун икĕ çултан тăракан хĕвел тухăç гороскопĕнчи юлашки çул. Ку çул ыланах тулăх пурнăçа тата укçа-тенкĕ енчен лайăхланасса шантарать.**

### ЙĔКЕ ХӲРЕ

Сысна çулĕнче йĕке хӳрен йывăрлăхсем пулмĕç. Хăйĕн бизнесне пуçараканшăн çулталăк уйрăмах ăнăçлă пулать. Ку çул вăл пурнăç ырлăхне туллин усă курать, хăйĕн сывлăхĕ те ăна савăнтарать.

### ВĂКĂР

Укçа-тенкĕ енчен çул аван иртĕ. Анчах та ĕçпе хăвна çыхса лартмалла мар, вăхăтра канни чылай усăллă. Ĕçлесе илнĕ укçапа тĕрĕс усă курма пĕлмелле. Юлташсемпе тата юратнă çынсемпе ытларах вăхăт иртгерĕр, отпускра ют çĕр-шыва канма кайса килсен те вырăнлă.

### ТИГР

«Кто не рискует, тот не пет шампанское» тени шăп та шай сирĕн çинчен. Ку çул эсир лоторея выляса илме пултаратăр, е кĕтмен çĕртен пысăк тупăш илетĕр — чи кирли хăвăрăн ăнăçăва шанăр, шикленмесĕр ума лартнă тĕллев патне утăр. Укçа-тенкĕре кăна мар юратура та сире кĕтмен çитĕнӳсем савăнтарĕç.

### КРОЛИК/ КУШАК

Енчен те çулталăк пуçламĕшĕнче ăнăçусем пулнăран пуçа çухатмасан, тепĕр хĕл çитиччен çемье пурнăçĕ калкал пырĕ, укçа-тенкĕ те çитĕ. Пылак тата çуллă апатçимĕçе çынă чух асăрханулăрах пулăр, ытлашши çини те сирĕн сывлăхшăн питĕ сиенлĕ.

### АÇТАХА

Сысна тата аçтаха çулĕсем — çулĕсем. Ĕçре пысăк ăнăçусем тăватăр, сирĕн карьера та ăнăçлă пулĕ. Анчах та юратнă çынпа хутшăнма йывăртах — хăвăра кăнттам, мăн кăмăллă ан тытăр; ыттисемпе çепĕçрех тата савăнăçлăрах пулсан сире те чун-чĕререн юратĕç.

### ÇĔЛЕН

Çĕленшĕн ку çул ăнăçлисенчен пĕри. Çĕлен пуяс тесе антăхмаст пулин те укçа-тенкĕ алла килни ăна та савăнтарĕ. Пуласлăха пăхса илнĕ япаласем сире чылай вăхăт хушши усă кӳрĕç. Кашни çул сире кун пек ăнмĕ, çавăнпа та укçа-тенкĕн пĕр пайне йывăр кунсенче усă курма хăварăр.

### ЛАША

Лашасен пурнăçĕ ăнса пымалла, укçа-тенкĕ ыйтăвĕсем те çăмăллăнах татăлаççĕ. Азарт вăййисене кăна выляма юрамасть. Юлташсен енчен те кĕтмен пулăшу килме пултарать. Пулас студентсен пурнăçĕ те шутланă пек шымала.

### КАЧАКА

Сысна çулĕ качакасемшĕн ăнăçлă çул. Анчах та хăвăн вăйсене шанмалла, пессимизм валли вырăн пулмалла мар, активлăх кăтартмалла.

### УПĂТЕ

Упăтесен чун апачĕ çинчен ытларах шухăшламалла. Кĕнеке нумайтарах вулăр, музей-театрсене çӳрĕр. Тусюлташсем çинчен манмалла мар кăна. Вĕсемпе кăнттам пулмалла мар.

### АВТАН

Автансен нумай ĕçлеме тивет. Юратупа туслăх чăтăмлăхра тата ăнланура туптанаççĕ.

### ЙЫТĂ

Йытă çулĕнче çуралнисен ăшшиллĕхĕ ырлăх илсе килет. Çывăх çынсене тимлĕх ытларах уйăрмалла, туссем тимсĕр те чурăс пуласси çинчен асра тытмалла.

### СЫСНА

Сысна хăйне çак çул телейлĕ туйĕ. Ырă кĕтменлĕхсем нумай пулĕç.


| | | |
|---|---|---|
| **Проект авторĕсем:** Александр Степанов, Владимир Кожевников, Эльвира Портнова | Редколлеги членĕсем: Евгений Ефстафьевич Ерагин, Светлана Васильевна Асамат, Ирина Венедиктовна Осипова, Валерий Семенович Рубцов, Николай Григорьевич Ванеркин | Хаçата «Çĕрпӳ издательство çуртĕнче» пичетленĕ. Адрес: Çĕрпӳ хули, Просвещени ур. 41 Тираж: 999 экз. Заказ: |
| Хысалти парта. Кайри мала! | Редакци адресĕ: 429541,Чăваш Республики, Муркаш районĕ, Калайкассинчи вăтам шкул. Хаçата шкулăн компьютер класĕнче калăпланă. *электрон адресĕ:* interhypar@mail.ru | Бильд-редактор: Александр Степанов. Тĕп редактор: ВладимирКожевников Редактор çумĕ: Эльвира Портнова. Корреспондентсем: Лариса Осипова, Таня Шарикова, Оля Кошкина, Дима Соколов |